27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 НОЯБРЬ 10 ЭРНЕКУН 221(6716) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

1944 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕ №220 *Мускав хули*

Юлташсем — красноармеецсемпе краснофлотецсем, сержантсем, офицерсемпе генералсем! Совет Союзĕнчи ĕçсыннисем! Фашистла каторгăна Германие ирĕксĕрлесе хăваласа кайнă тăвансем!

Совет Правительстви тата пирĕн большевикла парти ячĕпе сире Октябрьти Социализмлă Аслă Революци XXVII çул тултарнă майпа саламласа, ырă сывлăх сунатăп.

Октябрьти революци çирĕм çичĕ çул тултарнине эпир Хĕрлĕ Çар хамăр Тăван çĕршывăн тăшманĕсене татăклăн çĕнтерсе пынă лару-тăрура уявласа ирттеретпĕр. Хĕрлĕ Çарпа совет халăхĕ геройла вăй хурса кĕрешнипе пирĕн çĕр фашистла нимĕç захватчикĕсенчен тасалчĕ.

Кăçалхи çул совет çарĕсем тăшмана татти-сыпписĕр, вăйлăнрах та вăйлăнрах пыра-пыра çапрĕç. 1944 çулхи хĕлле Хĕрлĕ Çар Днепр шывĕн сылтăм енчи Украинăра чаплă çĕнтерӳсем турĕ, нимĕçсене Ленинград патĕнче çапса аркатрĕ. Кăçалхи çуркунне Хĕрлĕ Çар Крыма нимĕçсенчен тасатрĕ. 1944 çулхи çулла пирĕн çарсем гитлерла çарсене çав тери пысăк пораженисем тӳстерчĕç, çавна пула фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнчи лару-тăру тĕпренех улшăнчĕ. Хĕрлĕ Çар тăшманăн Карели перешеекĕнчи çавăн пекех тата Ладогăпа Онега кӳллисем хушшинчи хăватлă оборонине аркатса тăкрĕ те Финляндие Гитлерăн вăрă-хурахла блокĕнчен çапса кăларчĕ. Белоруссири çĕрĕсем çинчи историллĕ çапăçусенче Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем нимĕçсен виçĕ армирен тăракан центрти группировкине пусĕпех çапса аркатрĕç, çавăн чухне нимĕçсен 540 пин салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтерчĕç е тыткăна илчĕç. Кăнтăрти çапăçура Хĕрлĕ Çар, нимĕçсен икĕ армирен тăракан çарĕсен группировкине çавăрса илсе, пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкрĕ. Çавăн чухне совет çарĕсем нимĕçсен 250 пин салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе пĕтерчĕç е тыткăна илчĕç. Хĕрлĕ Çар нимĕçсене Румынире çапса аркатрĕ, вĕсене Болгарирен сирпĕтсе кăларчĕ, халĕ нимĕçсене Венгри территорийĕ çинче çапать. Пирĕн çарсем гитлерла çарсен Балтика тăрăхĕнчи группировкине аркатса тăкрĕç. 1944 çулхи çуллахи кампани вăхăтĕнче Хĕрлĕ Çар, тăшманпа çапăçса, Кишиневран пуçласа Белград патне çитиччен — 900 километр ытла, Жлобинран пуçласа Варшава патне çитиччен — 600 километр ытла, Витебскран пуçласа Тильзит патне çитиччен — 550 километр утса тухрĕ. Вăрçă халĕ ĕнтĕ фашистла Германин территорийĕ çине куçрĕ.

Тăшманпа çапăçса пырса, Хĕрлĕ Çар фашистла нимĕç захватчикĕсене Советлă Украинăпа Белорусси, Карел-Финн, Молдаван, Эстони, Латвипе Литва советлă республикисен мĕнпур территорийĕ çинчен хăваласа кăларчĕ. Нимĕçсем вăхăтлăха тытса илнĕ пирĕн тăванла совет республикисен çĕрĕсем çинче виçĕ çул хушши пуç пулса тăнă фашистсен пусмăрлăхне сирпĕтсе антарнă. Хĕрлĕ Çар вуншар миллион совет çыннисене ирĕклĕх тавăрса пачĕ. Совет государствин чиккине, гитлерла йытă кĕтĕвĕсем 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче ултавлăн пăсăскерне, Хура тинĕсрен пуçласа Баренц тинĕсĕ патне çитиччен пĕтĕмпех юсаса йĕркеленĕ.

Çапла вара, иртнĕ çулталăк совет çĕрне фашистла нимĕç захватчикĕсенчен пĕтĕмĕшпех ирĕке кăларнă çулталăк пулса тăчĕ.

Тăван çĕре гитлерла ирсĕрсенчен ирĕке кăларса çитерсе, Хĕрлĕ Çар халĕ Польша, Югослави, Чехословаки халăхĕсене фашистла чуралăхăн сăнчăрне татма тата вĕсен ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне ура çине тăратма пулăшать.

Иртнĕ çулхи хĕллехи тата çуллахи çапăçусенче Хĕрлĕ Çар хăйĕн вăрçăри мастерлăхĕ ӳснине кăтартса пачĕ. Хĕрлĕ Çар воинĕсем тăшманăн çирĕплетнĕ тăрăхĕсене пĕлсе те пултаруллăн çĕмĕрсе пычĕç, тăшмана хыçранах хăвăрттăн йĕрлесе пычĕç, ăна çавăра-çавăра илсе пĕтере-пĕтере тăкрĕç. Наступленилле çапăçусенче мĕнпур йышши совет çарĕсем пĕр-пĕринпе таччăн çыхăнса, килĕштерсе кĕрешни, пысăк ăсталăхлă маневрсем туса кĕрешни палăрчĕ. Совет воинĕсем çапăçусенче пиçĕхсе çирĕпленчĕç, тăшмана аркатма тата çĕнтерме вĕренсе çитрĕç. Хĕрлĕ Çар тăшманшăн хаяр вăй пулса ӳссе çитĕнчĕ, вăл ĕнтĕ хăйĕн вăрçăри пултарулăхĕ тата çапăçу техники тĕлĕшне тăшманран çӳлте те малта тăрать.

Хĕрлĕ Çарăн вăйĕсем совет тылĕ кал-каллăн та тикĕс ĕçленипе нумай хут ӳссе тĕрекленеççĕ. Рабочисемпе колхозниксем, интеллигенци Тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен тивĕçне чыслăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ, вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене геройла çĕнтереççĕ, Хĕрлĕ Çара хĕçпăшал, вут-çулăм хатĕрĕсемпе апат-çимĕç татти-сыпписĕр парса тăраççĕ. Совет хуçалăхĕ хăйĕн вăй-хăватне тăтăшах ӳстерсе пырать, фронта вăйлăнрах та вăйлăнрах пулăшса тăрать.

Хĕрлĕ Çарпа совет халăхĕ тăшмана пĕтерсе тăкмаллах çĕнĕрен пырса çапма хатĕр тăраççĕ. Гитлерла юнлă режимăн шутлă кунсем юлчĕç. Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнипе фашистсен блокĕ татăклăнах ишĕлсе анчĕ, гитлерла Германи хăйĕн нумай союзникĕсемсĕр тăрса юлчĕ. Пирĕн союзниксем Хĕвеланăç Европăра мастерла туса ирттернĕ пысăк операцисем нимĕç çарĕсене Франципе Бельгире çапса аркатасси патне тата çав çĕршывсене фашистла оккупацирен ирĕке кăларасси патне илсе пычĕç. Союзниксен çарĕсем Германин хĕвеланăç чикки урлă каçрĕç. Хĕрлĕ Çар тата Англипе Америка çарĕсем гитлерла Германие пĕрле пыра-пыра çапни вăрçа çĕнтерӳллĕн вĕçлес сехете çывхартрĕ. Гитлерла Германие йĕри-таврах хупăрласа илесси вĕçленсе пырать. Фашистла тискер кайăкăн шăтăкне мĕнпур енчен çавăрса илнĕ, халĕ ĕнтĕ тăшман нимĕнле чееленсе хăтланни те ăна пурпĕрех тата пĕтĕмĕшпех çапса аркатассинчен çăлса хăварма пултараймасть.

Хĕрлĕ Çарпа пирĕн союзниксен çарĕсем Германин пурнăç центрĕсем çине татăклă наступлени пуçласа ямалли малти позицисене йышăнчĕç. Халĕ ĕнтĕ задача — Пĕрлешнĕ нацисен çарĕсем хăвăрттăн пырса хĕссе гитлерла Германие чи кĕске срокра аркатса тăкасси пулса тăрать.

Юлташсем — красноармеецсемпе краснофлотецсем, сержантсем, офицерсемпе генералсем! Совет Союзĕнчи ĕçсыннисем!

Отечественнăй Аслă вăрçăра эпир хамăрăн Тăван çĕршыва захватчиксенчен хӳтĕлесе хăвартăмăр, ССР Союзĕнчи халăхсене фашистла ирсĕрсем чуралăха кĕртсе ӳкерес хăрушлăха пĕтĕмпех пĕтерсе тăкрăмăр, халĕ ĕнтĕ эпир татăклă çĕнтерӳ умĕнче тăратпăр.

Хĕрлĕ Çар фронтра тунă историллĕ çĕнтерӳсене тата рабочисем, хресченсем, интеллигенци тылра тунă аслă çитĕнӳсене палăртса хăварас тесе, Совет çĕрне фашистла нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнине чысласа, — çапла тума ПРИКАЗ ПАРАТĂП:

Паян, Октябрьти Социализмлă Аслă Революци XXVII çул тултарнă кун, çирĕм сехетре Мускавра, Ленинградра, Киевра, Минскра, Петрозаводскра, Таллинра, Ригăра, Вильнюсра, Кишиневра, Тбилисире, Севастопольре, Львовра артиллерирен çирĕм тăватă хут пĕр харăс персе салют памалла.

Сывă пултăр Октябрьти Социализмлă Аслă Революци XXVII çул тултарни!

Сывă пултăр пирĕн ирĕклĕ Тăван совет çĕршывĕ!

Сывă пултăр пирĕн Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ!

Сывă пултăр аслă совет халăхĕ!

Хамăр Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешсе вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов тунă йышăну

Ноябрĕн 7-мĕшĕнче Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарнă май Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов дипломати корпусне йышăннă. Йышăнура Норвегин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Т. Ли господин, ют çĕршывсен посольствисемпе миссийĕсен пуçлăхĕсемпе дипломатиллĕ ответлă сотрудникĕсем, çар, тинĕс-çар тата авиаци атташисемпе вĕсен помощникĕсем, çар миссийĕсен начальникĕсемпе членĕсем пулнă.

Йышăнура çавăн пекех тата çаксем пулнă: СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕн Пĕрремĕш Заместителĕ Н. М. Шверник, А. И. Микоян, А. С. Щербаков, А. Н. Косыгин, СССР Халăх Комиссарĕсем—флот адмиралĕ Н. Г. Кузнецов, А. И. Шахурин, В. А. Малышев, Б. Л. Ванников, Д. Ф. Устинов, И. Т. Тевосян, М. Г. Первухин, А. Г. Зверев, К. Я. Сергейчук, С. А. Акопов, А. И. Ефремов, В. В. Вахрушев, С. З. Гинзбург тата ыттисем те, СССР Прокурорĕ К. П. Горшенин, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕсен Заместителĕсем — В. Г. Деканозов, С. А. Лозовский, М. М. Литвинов, И. М. Майский, УССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ Д. З. Мануильский, артиллерин Главнăй Маршалĕ Н. Н. Воронов, авиацин Главнăй Маршалĕ А. А. Новиков, бронетанковăй çарсен Маршалĕ Я. Н. Федоренко, авиаци Маршалĕ Ф. А. Астахов, авиаци Маршалĕ С. С. Жаворонков, инженери çарĕсен Маршалĕ М. П. Воробьев, адмирал Л. М. Галлер, СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. Ф. Горкин, СССР Наркоминделĕн, Наркомвнешторгĕн, Наркомоборонин, Наркомвоенморĕн ответлă работникĕсем, çавăн пекех тата ученăйсем, писательсем, артистсем, Совет Союзĕпе ют çĕршывсенчи пичет представителĕсем.

Октябрь 27 çул тултарнă ятпа Мускав салют парать

Кăçалхи Октябрь уявне — Совет çĕрне фашистла нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнин уявне—совет халăхĕ çав тери хĕпĕртесе, савăнса кĕтсе илнĕ. Сталин юлташăн историллĕ доклачĕн тата приказĕн сăмахĕсем пирĕн аслă Тăван çĕршывăн пĕр хĕрринчен тепĕр хĕррине саралнă. Вĕсем Хĕрлĕ Çарăн аслă çĕнтерĕвĕсем çинчен пĕлтернĕ. Хĕрлĕ Çарăн халь ĕнтĕ хăйĕн юлашки ĕçне тумалли юлать: пирĕн союзниксен çарĕсемпе пĕрле кĕрешсе, фашистла нимĕç çарне аркатса тăкас ĕçе вĕçлемелле, фашистла тискер кайăка хăйĕн шăтăкĕнче вĕлермелле тата Берлин çине çĕнтерӳ ялавĕ çĕклесе лартмалла.

Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ ноябрĕн 7-мĕшĕнче панă приказ тăрăх, совет халăхĕн аслă праçникне Мускав чаплă салют парса паллă тунă. Шăп 20 сехетре тупăсем пĕрремĕш хут харăс персе янă. Çав самантрах Мускав пĕлĕтне тĕслĕ-тĕслĕ темиçе пин çутă çутатса янă. Хĕрлĕ, кăвак, симĕс, йăмăх хĕрлĕ ракетăсем çӳле хăпарса кайнă, праçник ячĕпе илемлетнĕ урамсемпе площадьсене, çынсемпе тулнăскер сене. çутатса янă.

Мускав тупписем пирĕн хăватлă Хĕрлĕ Çарăн чапĕшĕн çирĕм тăватă хут персе янă. Мускаври темиçе çĕр пин çын Октябрь салючĕн çав чуна хавхалантаракан, калама çук илемлĕ картинине пăхса тăнă. Салюта радиопа панă. Ăна фронт тата пĕтĕм çĕршыв итленĕ. (ТАСС).

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председательне Совет Союзĕн Маршалне Иосиф Виссарионович СТАЛИНА

Паттăр Хĕрлĕ Çар хăватлăн пыра-пыра çапнипе пĕтĕм этемлĕхĕн чи усал тăшманне — гитлерла фашизма çĕмĕрекен Аслă Совет государствине туни 27 çул çитнĕ май Польша Халăхĕн Совечĕ тата Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕ Сире, Совет Союзĕн çулпуçне, ирĕке кăларакан аслă çарăн Верховный Главнокомандующине, чунтан-чĕререн хĕрӳллĕ салам яраççĕ.

Польша Халăхĕн Совечĕ тата Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕ пĕтĕм совет халăхне ырă сунаççĕ; Европăри пусмăрлăхра пурăнакан халăхсем, чи малтан пирĕн нумай асап курнă поляк халăхĕ, çав совет халăхне пула ирĕке тухрĕç.

Çапăçу хирĕсенче пĕрле юн тăкакан тата çĕнĕрен ура çине тăракан Польша государствине Совет Союзĕ пур енчен те пулăшни Совет Союзĕпе Польша халăхĕсем хушшинчи туслăха ĕмĕрлĕхе çирĕплетсе хурĕç.

Польша Халăх Совечĕн Председателĕ — БЕРУТ.

Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕн Председателĕ — ОСУБКА-МОРАВСКИЙ.

Унăн Превосходительствине Калинин господина, СССР Верховный Совет Президиумĕн Председательне

МУСКАВ.

Октябрьти Революци 27 çул тултарнă май эпĕ Сирĕн Превосходительство урлă хамăрпа туслă Совет Союзĕн халăхĕсене хĕрӳллĕн саламлатăп, вĕсене чунтан-чĕререн телей тата чечекленсе ӳсме сунатăп.

ИНЕНЮ.

СОВЕТ ХАЛĂХĔН ИСТОРИЛЛĔ ÇĔНТЕРĔВĔ

Кĕтнĕ кун çитрĕ!

Совет çĕрне фашистла нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă. Пирĕн халăх пурнăçĕнчи çав историллĕ ĕçе ĕнер çĕршыври вуникĕ хулара артиллерирен çирĕм тăватă хут пĕр харăс персе паллă тунă. Пирĕн чĕресем савăнăçпа, хаваслăхпа тулчĕç. Эпир çак кун çитессине ĕмĕтленнĕ, эпир ун патне çитессишĕн кĕрешнĕ. Çав куна çитерессишĕн эпир йывăр испытанисем тӳссе ирттертĕмĕр, çав куншăн пирĕн тăван çĕршывăн чи лайăх ывăл-хĕрĕсем хăйсен юнне тăкрĕç. Пирĕн çулпуç тата полководец кăтартса панă çĕнтерӳ патне эпир хăюллăн утрăмăр. Паян çулпуç сăмахĕ, аслă Сталин сăмахĕ пурнăçа кĕчĕ. Пирĕн урама праçник çитрĕ. Эпир хамăр тăван çĕршывран тăшмана хăваласа кăлартăмăр. Тăшман хăйĕн ирсĕр тирĕ çинче пирĕн истори урокне татах та тепĕр хут тӳссе ирттерчĕ: кам пирĕн çĕр çине хĕçпе килет, вăл хĕçренех вилет!

Анчах ирсĕр тăшмана вĕçне çитиччен тавăрайман-ха. Пирĕн халăх тарăхăвĕн вăйне унăн пĕтĕмĕшпех тӳссе курма лекĕ. Совет çĕрĕ çинчен вăрçа фашистла Германин территорийĕ çине куçарнă. Вуникĕмĕш сехет çапать, — тискер кайăк йăвине часах ăна юлашки хут аркатмаллах пырса çапăпăр. Гитлерла тискер кайăкăн шăтăкне мĕнпур енчен çавăрса илнĕ, ылханлă тăшман нимĕнле чееленсе хăтланни те ăна пурпĕрех тата пусĕпех çапса аркатассинчен çăлса хăвараймĕ.

Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарни çинчен тунă историллĕ доклада совет çыннисем сывлама чарăнсах тенĕ пек итлерĕç. Сталин юлташ совет халăхĕ тунă çĕнтерӳсем çинчен каларĕ. Унăн доклачĕ эпир утса тухнă çула çутатса пачĕ. Вăл пирĕн аслă вăхăтри историллĕ ĕçсене витĕмлĕ те уçăмлă анализ туса пачĕ. Вăл пирĕн малалла каймалли çулĕсене уçса пачĕ. Вăл пирĕн пуласлăх çинчен каларĕ. Çулпуç докладне итленисем пурте — пирĕн Тăван çĕршыв столицинче те, унăн чикĕ хĕрринчи кордонĕнче те, — хамăрăн çулпуçăмăр, аттемĕр тата учителĕмĕр калани çине хăйсен пĕтĕм чун-чĕринчен, пĕтĕм шухăш-кăмăлĕнчен ответлерĕç. Эпир Сталина вĕçĕ-хĕррисĕр юрататпăр; пĕтĕм тĕнче историйĕнче çав тери пысăк вырăн йышăнса тăракан ĕçсем унăн ячĕпе çыхăнса тăраççĕ, унăн генийлĕ ăсĕ пирĕн халăха вăрçăн хаяр çулĕсем тăрăх ертсе пычĕ, вăл пире нимĕç захватчикĕсене пусĕпех çĕнтересси патне ертсе пырать.

Сталин юлташăн доклачĕ — пирĕн халăх, большевикла парти, Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе, тунă аслă ĕçсен итогĕ пулса тăрать. Революци 27 çул тултарнă уяв Отечественнăй вăрçăн тăваттăмĕш çулĕпе пĕр вăхăтра килчĕ. Вăрçăн малтанхи икĕ çулĕ нимĕç çарĕсем наступлени туса пынă тата вĕсем пирĕн çĕршывалла шалалла куçса пынă çулсем. Хĕрлĕ Çарăн оборонăллă çапăçусем туса пымалли çулсем пулчĕç. Вăрçăн виççĕмĕш çулĕ пирĕн фронтра татăклă улшăну пулса тăнă çул пулчĕ. Çав çул Хĕрлĕ Çар, тăшманпа çапăçса, хăватлă наступлени парса ячĕ, нимĕçсене татăклă чылай çапăçусенче çапа-çапа аркатрĕ, совет çĕрĕн виçĕ пайĕнчен икĕ пайне нимĕç çарĕсенчен тасатса, вĕсене оборонăна куçмалла туса хучĕ.

Çав çулсенче Хĕрлĕ Çар нимĕç çарĕсене хирĕç çаплах пĕччен, союзниксем енчен пысăк пулăшу илмесĕр çапăçса пычĕ. Вăрçăн тăваттăмĕш çулĕпе унчченхи çулсем хушшинче пысăк уйрăмлăх пур. Çак çул вара совет çарĕсемпе пирĕн союзниксен çарĕсем нимĕç çарĕсене татăклăн çĕнтерсе пынă çул пулчĕ. Нимĕçсен ирĕксĕрех икĕ фронтра вăрçмалла пулса тăчĕ, вĕсем пысăк пораженисем тӳсрĕç. Нимĕçсене Совет Союзĕн çĕрĕ çинчен, Франци, Бельги, Вăтам Итали çĕрĕсем çинчен хăваласа кăларнă. Нимĕçсене хăйсен территорийĕ çинче çапăçмалла туса хунă. Германи икĕ фронтăн хĕскĕчĕ хушшине кĕрсе ӳкрĕ, çавăн пек пулассинчен фашистла пуçкасакансем уйрăмах хытă хăраса тăнă.

Сталин юлташ хăйĕн докладĕнче пирĕн çарсем нимĕç çарĕсене аркатмаллах пыра-пыра çапнин картинине кăтартса пачĕ. Вăрçăн кăçалхи вунă уйăхĕ хушшинче нимĕçсене çавăн пек вунă хутчен пыра-пыра çапнă. Çавăн пек пыра-пыра çапасси вăл Совет Союзĕпе Германи хушшинчи çав тери пысăк фронтăн мĕнпур участокĕсенче, Çурçĕр Финляндирен пуçласа Карпат тăвĕсем патне çитиччченех, пулса пычĕ. Çавăн пек пыра-пыра çапнине пула, Ленинград облаçне, Днепр шывĕн сылтăм енчи Украинăна, Крымпа Одессăна, Карел-Финн Советлă республикине, Белорусси ССР-не, Хĕвеланăç Украинăна, Молдаван ССР-не, Советлă Балтика тăрăхне оккупантсенчен ирĕке кăларнă. Хĕрлĕ Çар ăнăçлă операцисем туса пынине пула, Румыни, Финляндипе Болгари фашистла Германипе политика тата вăрçă тĕлĕшĕнчен тытса тăнă союза татрĕç те хăйсен хĕçпăшалне Гитлера хирĕç çавăрчĕç. Хĕрлĕ Çар пирĕн союзница пулса тăракан Польша çĕрĕн чылай пысăк пайне ирĕке кăларчĕ, халĕ вăл пиренпе союзлă пулса тăракан Югославипе Чехословаки çĕршывĕсене пулăшса тăрать. Кăçалхи çул туса ирттернĕ операцисене пула, нимĕçсемпе вĕсен союзникĕсен 120 çитти дивизине çапа-çапа аркатнă тата стройран кăларнă.

Пирĕн геройла Хĕрлĕ Çар тата пирĕн союзниксен паттăр çарĕсем гитлерла вăрă-хурахсен ют çĕрсене, ют пурлăха тытса илес ĕмĕчĕсене яланлăхах пĕтерсе лартрĕç. Нимĕçсен юнлă агрессийĕнчен халиччен асап курнă тата халĕ асап куракан çĕршывсемпе халăхсем пĕтĕм чун-чĕререн кĕтсе тăракан приговора Пĕрлешнĕ нацисен çарĕсем пурнăçа кĕртме хатĕр тăраççĕ, вĕсен çав приговора пурнăçа кĕртме вăйсем çителĕклĕ.

«Задача халĕ Германие малашне те икĕ фронтăн хĕскĕчĕ хушшинче тытса тăрасси пулать. Çакăнта ĕнтĕ çĕнтерӳ тумалли май», — тет Сталин юлташ.

Гитлерла Германи вилĕм шăтăкĕ умĕнче тăрать. Унăн лайăх вĕрентсе хатĕрленĕ хăватлă çар пулнă. Вăл хăй аллинче хăйĕн тарçисен чылай пысăк çарĕсене тытса тăнă. Вăл мĕнпур Европăн тенĕ пек производствăллă вăйĕсемпе усă курнă. Вăл, пĕтĕм тĕнчери правăсене ирсĕррĕн пăсса, вăрçăра мĕнпур тĕрлĕ майсемпе тата месетсемпе усă курнă. Вăл миллионшар чурасене хăйшĕн ĕçлеттернĕ. Вильгельмăн «броньăланă чăмăрĕ» гитлерла Германин вăрçă машининчен нумай вăйсăртарах пулнă. Вăрçă туса пымалли условисем фашистла Германишĕн нумай енĕпе майлăрах пулнă. Çав условисене пăхмасăрах, гитлерла Германипе унăн фашистла çарĕ иртнĕ мĕнпур вăрçăсенчи Германипе унăн çаренчен хăватларах, ултавлăрах тата опытлăрах тăшман пулнине пăхмасăрах, ăна çак вăрçăра çапса аркатнă, унăн ĕçĕ путланса пырнă.

Совет Союзĕ хăйĕн хăвачĕпе гитлерла Германирен вăйлăрах пулчĕ. «Совет государствин экономикăллă никĕсĕ тăшманла государствăсен экономикинчен танлаштарма çук хăватлăрах пулчĕ...» (И. Сталин). Çирĕм çичĕ çул каярах аслă Ленинпа Сталин тунă совет государстви хăйĕн çав тери пысăк вăйĕпе пахалăхне кăтартса пачĕ, çавсем вара пирĕн халăха тĕнчере халиччен пулман вăрçăн хаяр тĕрĕслевне чыслăн тӳссе ирттерме, çак вăрçăра çĕнтерме май пачĕç. Хуçалăхăн социализмлă системи гитлерла Германин экономикинчен нумай вăйлăрах та çавăрăнăçуллăрах пулни тата вăл çӳлерех те маларах тăни курăнчĕ. Эпир тăшмана хамăрăн воинсем çапăçура вĕçĕ-хĕррисĕр хастар та çирĕп пулнипе тата вĕсем шухăш-кăмăл тĕлĕшĕнчен малта тăнипе кăна мар çĕнтерсе пынă, çĕнтерсе пыратпăр та. Эпир тăшмана çавăн пекех тата пирĕн индустри, пирĕн хĕçпăшал маларах тăнипе те, çапăçу техники пахарах пулнипе те çĕнтерсе пыратпăр. Хĕрлĕ Çарăн халĕ ĕнтĕ танксем, тупăсем, самолетсем нимĕç çарĕнинчен сахалтарах мар, нумайтарах. Пирĕн çĕршыв тăшмана экономика тĕлĕшĕнчен çĕнтерчĕ.

Пирĕн çĕнтерӳсен çăлкуçĕ — советлă социализмлă строй пулса тăрать.

Çирĕм çичĕ çул каярах империалистсен влаçне сирпĕтсе антарса, пирĕн халăх хăйĕн историйĕнче малтанхи хут хăйшĕн ĕçлеме, хăйĕн пурнăçне çĕнĕ социальнăй никĕс çинче тума, пусмăрлакансемпе пусмăртисемсĕр, чурасемпе хуçасемсĕр пурăнма, пĕр халăх тепĕр халăха пусмăрланимсĕр пурăнма май илчĕ. Вăрçăра вăл хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне, этем обществин аталанăвĕнче çĕнĕ самана уçса панă Октябрьти Социализмлă Революцин аслă çĕнтерĕвĕсене хӳтĕлет. Çакăнта ĕнтĕ — пирĕн халăхăн фашизма хирĕç кĕрешес ĕçри вăйĕ. Çакăнта ĕнтĕ — пирĕн халăха вăрçă йывăрлăхĕсене, вăрçăн малтанхи тапхăрĕнче ĕçсем пирĕншĕн ăнăçсăр пулнине, пирĕн çар каялла чакса пынин хурлăхĕсене тӳссе ирттерме май панă хурçă пек çирĕп вăй-хăват.

Совет халăхĕ Отечественнăй вăрçăра çав тери паттăрла ĕçсем туса, геройла халăх чапне илчĕ. Хăйсен мĕнпур вăйне çĕнтерӳ тунă çĕре паракан рабочисем çинчен, çав ĕçе нимĕнпе хакласа çитерме çук парне кӳрекен интеллигентсем çинчен, тăшманпа çапăçма тата ăна çĕнтерме Хĕрлĕ Çара вăйлăн пулăшса тăракан колхозниксем çинчен Сталин юлташ мĕн тери чĕререн юратса та ăшă кăмăллăн калать! Сталин юлташăн сăмахĕсенче вăл совет хĕрарăмĕсемшĕн, пирĕн мухтавлă совет çамрăкĕсемшĕн, вăрçă вăхăчĕ ытнă пек ĕçлекенскерсемшĕн, фабрикăсемпе заводсенчи, колхозсемпе совхозсенчи ĕçĕн тĕп йывăрлăхĕсене хăйсен хулпуççийĕ çинче тӳссе ирттернĕскерсемшĕн, тăван атте пек мĕн тери тимлĕн тăрăшни палăрса тăрать.

«Совет çыннисем тылра тунă паттăрла ĕçсем, пирĕн воинсем фронтра вăрçă ĕçĕсенче тунă манăçа юлми паттăрла ĕçсем пекех, хĕрӳллĕ те чĕрĕ пурнăçлă совет патриотизмĕнчен çăлкуçланса тухаççĕ». (И. Сталин).

Совет патриотизмĕ хăйĕн ăшчикĕпе чи çӳллĕ те чи пархатарлă туйăм пулса тăрать. Совет патриотизмĕ рассăллă е нациллĕ тĕшмĕшлĕхсем çинче мар никĕсленсе тăрать. Унăн никĕсĕ — халăх хăйĕн тăван Совет çĕршывне пĕтĕм чун-чĕререн парăнса, Тăван çĕршывшăн шанчăклă пулса тăни, пирĕн çĕршыври мĕнпур нацисен ĕçсыннийĕсем пĕр-пĕринпе тăванла та туслă пурăнни пулса тăрать. Совет патриотизмĕнче халăхсен нациллĕ традицийĕсем тата Совет Союзĕнчи мĕнпур ĕçсыннисен пурнăç интересĕсем таччăн пĕтĕçсе тăраççĕ. Совет патриотизмĕ пирĕн çĕршыври мĕнпур нацисемпе халăхсене пĕр-пĕринчен уйăрса тăмасть, пачах та урăхла, вĕсене пĕр тăванла çемьене пĕтĕçтерет. Совет çынни хăйĕн тăван çĕршывне юратать, хăйĕн халăхне юратать. Анчах вăл çав вăхăтрах чикĕ леш енчи çĕршывсенчи халăхсен прависемпе никама пăхăнманлăхне те хисеплет. Пĕр-пĕр расса е наци тепĕр рассăпа нацирен çӳлерех тăни çинчен саракан шухăш унăшăн ют шухăш пулса тăрать. Фашизмăн этемлĕхе курайман рассăллă теорийĕ пирĕн мораль законĕсене хирĕç тăрать. Нимĕç фашисчĕсен тискер кайăкла национализмĕ çине пирĕн халăх йĕрĕнсе пăхать. Эпир тăшмана хамăрăн шухăш çӳлте тăнипе те çапатпăр, эпир тăшмантан танлаштарма çук вăйлăрах. Рассăллă курайманлăхăн идеологийĕпе политики фашистла государствăн шалти вăйсăрлăхне кăтартса паракан факторсенчен пĕри, гитлерла вăрă-хурахсен блокĕ арканса каясси патне илсе пынă факторсенчен пĕри пулчĕ.

«Вăрçă пынă вăхăтра гитлеровецсем вăрçă тĕлĕшпе кăна мар, тата моральпе политика тĕлĕшĕнчен те поражени тӳсрĕç. Пирĕн çĕршывра çирĕпленсе çитнĕ мĕнпур рассăсемпе нацисен пĕр танлăхĕн идеологийĕ, халăхсен туслăхĕн идеологийĕ гитлеровецсен тискер кайăкла национализмĕн тата рассăллă курайманлăхĕн идеологийе пĕтĕмĕшпех çĕнтерчĕ.

Халĕ, Отечественнăй вăрçă çĕнтерӳллĕ вĕçленесси патнелле пынă вăхăтра, совет халăхĕн историри вырăнĕ хăйĕн пĕтĕм пысăкĕшĕпе тухса тăрать. Совет халăхĕ, хăйне шеллемесĕр паттăррăн кĕрешсе, Европăри цивилизацие фашистла аркатуçăсенчен çăлса хăварнине халĕ пурте йышăнаççĕ. Çакăнта пулать ĕнтĕ совет халăхĕн этемлĕх историйĕ умĕнчи тава тивĕçлĕ питех те пысăк ĕçĕ». (И. Сталин).

Гитлерла Германие хирĕç кĕрешес ĕçре совет халăхĕ ирĕклĕхе юратакан нацисемпе пĕрле алла-аллăн пырать. Иртнĕ çулталăк Германие хирĕçле коалицин пĕрлехи ĕçĕ тунă чаплă çĕнтерӳсен çулталăкĕ пулчĕ; çав пĕрлехи ĕçшĕн Совет Союзĕнчи, Великобританири тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи халăхсем боевой союза пĕрлешрĕç. Иртнĕ çулталăк виçĕ пысăк çĕршывăн пĕрлĕхĕ тĕрекленнин тата вĕсем гитлерла Германие хирĕç пĕр-пĕринпе килĕштерсе кĕрешесси малалла ӳснин çулталăкĕ пулчĕ. Сталин юлташ виçĕ аслă державăн шухăшĕсем пĕрлĕхлĕ пулни çинчен тата вĕсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе кĕрешни çинчен каланине совет çыннисем пĕтĕм чун-чĕререн кăмăлласа кĕтсе илчĕç. Союзниксен вăрçăн пысăк операцийĕсем тĕлĕшпе тунă планĕсем туллин те тĕрĕс пурнăçа кĕрсе пыраççĕ. Германие пĕрле пырса çапас тĕлĕшпе Тегеранри конференцире туса хатĕрленĕ план кăçалхи вăрçă операцийĕсенче туллин те тĕрĕс пурнăçа кĕчĕ. Германие фронтсен хурçă кăшăлĕпе хупăрласа илни — çав пĕрле туса ирттернĕ операцисен результачĕ пулса тăрать.

Вăрçă хыççăнхи хăрушсăрлăха организацилес ыйтупа Думбартон-Окс-ра пулса иртнĕ конференцин решенийĕсем те Пĕрлешнĕ нацисен фрончĕ çирĕппине кăтартса параççĕ. Сталин юлташ çакна кăтартса парать: çав конференцире хăрушсăрлăх ыйтăвĕсен вунă пайĕнчен тăхăр пайне пĕтĕмĕшпех пĕр шухăш-кăмăллă пулса татса панă.

Пĕрлешнĕ нацисен фрончĕ çирĕпленсе пынине кăтартса паракан татах та уçăмлăрах тĕслĕх — нумаях пулмасть Великобритани правительствин пуçлăхĕпе Черчилль господинпа тата Великобританин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕпе Иден господинпа Мускавра туса ирттернĕ калаçусем пулса тăраççĕ, çав калаçусене туслă лару-тăрура тата пĕтĕмĕшпех пĕр шухăш-кăмăллă пулса туса ирттернĕ.

Пĕрлешнĕ нацисене пĕр-пĕринчен уйăрас тата пĕр-пĕринпе хирĕçтерес тесе, вĕсене пĕр-пĕрне шанмалла мар тăвас тесе, пĕр-пĕрин çине туслă мар пăхмалла туса хурас тесе, пĕр-пĕрне çавăн пек шанмалла мар туса хурса тата, май килсен, вĕсене пĕр-пĕринпе кĕрештерсе, вĕсен вăрçăри вăйĕсене чакарас тесе, гитлеровецсем хăтланса пăхнисем пурте путланса ларчĕç. Гитлеровецсем дипломати фронтĕнче те, çапăçу хирĕнчи пекех, поражени тӳсрĕç. Çав поражени ĕнтĕ виçĕ аслă державăн союзĕ çирĕппине кăтартса парать. Çав союз ăнсăртран тата вăхăтлăха килсе тухакан сăлтавсем çинче мар, пурнăçри нумай вăхăтлăха пыракан паха интересем çинче никĕсленсе тăрать.

«Çакăн пирки иккĕленмелли çук: демократиллĕ державăсен боевой союзĕ виçĕ çул ытларах пыракан вăрçăн тĕрĕслевне тӳссе ирттерчĕ пулсан тата ăна хăйсен ирĕклĕхĕпе чыслăхне хӳтĕлеме çĕкленнĕ халăхсем юнпа пĕтĕçтерсе çирĕплетрĕç пулсан, çав союз вара вăрçăн юлашки тапхăрĕнчи тĕрĕслеве татах та ăнăçлăнрах тӳссе ирттерет». (И. Сталин).

Сталин юлташăн докладĕнче Германи енчен çĕнĕ агресси пулассине сирсе ямалли майсене, мире хӳтĕлес тата хăрушсăрлăх туса хурас тĕлĕшпе витĕмлĕн те усăллăн ĕçлеме пултаракан пĕтĕм тĕнчери организаци туса йĕркелемелли çула кăтартса панă.

Гитлерла Германие çапса аркатни — мирпе хăрушсăрлăх туса хумалли татăклă майсенчен пĕри пулса тăрать. Германи империалисчĕсем енчен çĕнĕ агресси пулас кирек мĕнле майсене те пĕтерсе лартмалла.

Сталин юлташăн историллĕ доклачĕ пирĕн халăха вăрçă пĕтсе пынă тапхăрта татах та вăйлăнрах хĕçпăшаллантарать. Сталин юлташăн уçăмлă та тарăн шухăшлă сăмахĕсенче — халăха мобилизацилекен çав тери пысăк вăй курăнса тăрать. Çав сăмахсем кашни боецпа командирăн, рабочипе хресченĕн, интеллигентăн шухăшĕпе чĕри патне çитрĕç. Çав сăмахсем çине мĕнпур ĕçсыннисем, пирĕн Тăван çĕршывăн мĕнпур патриочĕсем пĕр шухăш-кăмăллă пулса хавхаланулла та хăватлă ответ пачĕç. Çав сăмахсем практикăллă ĕçре пурнăçа кĕрĕç. Рабочисемпе хресченсем тата интеллигенци хăйсен юратнă çулпуçĕ чĕнсе каланине ĕç фронтĕнче мĕнпур вăя хурса ĕçленипе ответлеççĕ. Боецсемпе командирсем, хăйсен генийлĕ полководецĕ панă приказ тăрăх, тăшмана юлашки хут пырса çапма хăйсен хĕçпăшалĕпе вăрçăри мастерлăхне татах та ытларах туптаса çивĕчлетĕç.

Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ И. В. Сталин 1944 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕнче панă хăйĕн историллĕ приказĕнче çакăн пек боевой задача лартрĕ: «Хĕрлĕ Çарпа пирĕн союзниксен çарĕсем Германин пурнăç центрĕсем çине татăклă наступлени пуçласа ямалли малти позицисене йышăнчĕç. Халĕ ĕнтĕ задача — пĕрлешнĕ нацисен çарĕсем хăвăрттăн пырса хĕссе гитлерла Германие чи кĕске срокра аркатса тăкасси пулса тăрать».

Пирĕн аслă çулпуç тата полководец ăслăн ертсе пынипе, Хĕрлĕ Çар хамăрăн союзниксен çарĕсемпе пĕрле, фашистла нимĕç çарĕсене çапса аркатас ĕçе вĕçне çитерĕ, фашистла тискер кайăка хăйĕн шăтăкĕнчех çапса вĕлерĕ те Берлин çине çĕнтерӳ ялавĕ çĕклесе лартĕ.

(«ПРАВДА», ноябрĕн 8-мĕшĕнчи умстатьи).

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарнă ятпа ют çĕршывсен политика деятелĕсем янă саламсем

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарнă май Мускава çаксем саламсем янă:

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ Калинин юлташ ячĕпе — Египет королĕ Фарук тата Польша Халăх Совечĕн Председателĕ Берут господин;

Совет Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ тата Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ ячĕпе — Çĕнĕ Зеландин Премьер-министрĕ П. Фрезер господин, Югослави Правительствин Председателĕ Шубашич господин, Чехословакин Наци Оборонин Министрĕ Ян Масарик господин, Турци Премьер-министрĕ Сараджоглу господин, Польшăри хресченсен партийĕн руководителĕсем Станислав Котек-Агрошевский тата Ян Грубецкий господинсем;

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн Заместителĕ тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ Молотов юлташ ячĕпе—Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Государство секретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ Л. Р. Стеттиниус господин, Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕн Председателĕ Осубка-Моравский господин тата Турцин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Хасан Сак господин (ТАСС).

Ĕççынни депутачĕсен Мускав хула Совечĕн Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарнă ятпа пулнă чаплă ларăвĕ

Ноябрĕн 6-мĕшĕнче Кремльти Дворецăн Пысăк Залĕнче Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарнă ятпа ĕççынни депутачĕсен Мускав хула Совечĕн партипе общество организацийĕсен тата Хĕрлĕ Çарăн представителĕсемпе пĕрле тата стахановецсемпе, совет интеллигенцийĕпе пĕрле чаплă ларăвĕ пулса иртнĕ.

Кремльти Дворецăн çав тери чаплă залне вырнаçнă виçĕ пин çын хушшинче—ВКП(б) Центральный Комитечĕн членĕсем, СССР Верховный Совечĕпе РСФСР Верховный Совечĕн депутачĕсем, Халăх Комиссарĕсем, Совет Союзĕн Геройĕсем, Социализмлă Ĕç Геройĕсем, Хĕрлĕ Çарăн генералĕсемпе офицерĕсем, партипе совет активĕ, промышленноçпа транспорт командирĕсем, ĕçре чапа тухнă стахановецсем, чаплă ученăйсем, искусство деятелĕсем.

19 сехетре президиум ларакан вырăна Сталин юлташ пырса тăрать. Унпа пĕрле унăн боевой соратникĕсем — партипе правительство руководителĕсем пыраççĕ. Залри çынсем пурте, пĕр çын пек пулса, ура çине тăраççĕ. Пурте çав тери савăнса тăвăллăн алă çупаççĕ, пĕтĕм чĕререн хумханса саламлаççĕ.

— Сывă пултăр Сталин юлташ!

— Сталин юлташа — мухтав!

— Аслă Сталина — ура!

Сталин юлташ чаплă ларури çынсене ăшшăн та пĕтĕм чĕререн сывлăх сунать, вĕсене туслăн алă çупса ответлет. Пурте ăнланаççĕ: Сталин юлташ вĕсене саламласа, пĕтĕм совет халăхне — фронт геройĕсене, заводсемпе фабрикăсен, колхоз хирĕсен тата наукăн геройĕсене — саламлать. Çакна ăнланни çынсене тата ытларах хавхалантарать. Çынсем тата хытăрах алă çупаççĕ, залăн пĕр вĕçĕнчен тепĕр вĕçне çитиччен саламлă сăмахсем янăраса каяççĕ, вĕсене темиçе пин çын «ура» кăшкăрса ырлать.

Юлашкинчен залра шăп пулса тăрать. Сталин, Молотов, Калинин, Ворошилов, Каганович, Андреев, Микоян, Берия, Шверник, Маленков, Щербаков, Вознесенский, Пронин юлташсем президиумра хăйсен вырăнĕсене йышăнаççĕ. Ложăсенче — ВКП(б) Центральный Комитечĕн членĕсем, СССР Верховный Совет Президиумĕн членĕсем, Халăх Комиссарĕсем.

Ĕççынни депутачĕсен Мускав хула Совечĕн исполкомĕн председателĕ Пронин юлташ чаплă ларăва уçать. ВКП(б) Мускав хула комитечĕн секретарьне Попов юлташа сĕнӳ пама сăмах парать.

Попов юлташ чаплă ларăвăн хисеплĕ президиумне суйлама сĕнет.

— Сталин юлташ!

Çулпуçăн ятне, пирĕн халăхăн боевой пĕрлĕхĕпе аслă çĕнтерĕвĕсене палăртса тăракан çак ята илтсен, пĕтĕм зал хăватлăн алă çупма тытăнать. Сталин юлташа саламлас тесе, ăна пĕтĕм халăх юратнине тата тав тунине палăртса, пурте ура çине тăраççĕ.

Унтан, çав тери хавхаланса, хисеплĕ президиума Молотов, Калинин, Ворошилов, Каганович, Андреев, Микоян, Жданов, Хрущев, Берия, Шверник, Маленков, Щербаков, Вознесенский юлташсене суйлаççĕ.

Сталин юлташăн боевой соратникĕсен ячĕсене нумайччен хĕрӳллĕн алă çупса кĕтсе илеççĕ.

Пронин юлташ çапла пĕлтерет:

— Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарни çинчен доклад тума Оборонăн Государственный Комитечĕн Председательне Сталин юлташа сăмах паратăп, тет.

Сталин юлташ трибуна патне пырать. Ăна калама çук вăйлăн алă çупса кĕтсе илеççĕ. Пурте ура çине тăраççĕ, çулпуçне çав тери ăшшăн, пĕтĕм чун-чĕререн саламлаççĕ.

Тăвăллăн алă çупнă хушăра — сывă пултăр Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ—тени янăраса каять. Пурте хăватлăн «ура» кăшкăраççĕ.

Алă çупма чарăнсан, залра шăп пулса тăрать. Çынсем çулпуçăн пĕр сăмахне те унăн сассин пĕр улшăнăвне те сиктерсе хăварас мар тесе, тимлĕн итлесе ларaççĕ.

Сталин юлташ, яланхи пекех, лăпкăн, простă, çирĕп шанса, питĕ ăнланмалла тата çав тери ĕнентермелле калать. Ăна итлесе, çынсем иртнĕ çулхи событисене хăйсен ăшĕсенче тепĕр хут пăхса тухаççĕ, хăйсен кĕрешĕвĕне ĕçĕсен историри аслă пĕлтерĕшне ăнланса илсе хаклаççĕ.

Хĕрлĕ Çар хăйĕн тивĕçне чыслăн пурнăçа кĕртрĕ, хамăр Тăван çĕршыва тăшмантан тасатрĕ, тенине залри çынсем патриотла савăнса, мухтанса йышăнаççĕ.

— Паянтан вара ĕмĕрлĕхех, — тет Сталин юлташ, — пирĕн çĕр гитлерла ирсĕрсенчен тасалчĕ.

Вăрçăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах, вăрçăн чи йывăр тапхăрĕсенче те, Сталин юлташ çĕнтерӳ çинчен çак сăмахсене калас вăхăт çитессине совет çыннисем çирĕп пĕлсе, хытă ĕненсе тăнă. Акă вăл вăхăт килсе çитрĕ, халăх шанни вырăнсăр пулмарĕ.

Хĕрлĕ Çар тунă çĕнтерӳсем питĕ аслă. Анчах та кĕрешӳ пĕтмен-ха. Сталин юлташ çакăн çинчен астутарать: Хĕрлĕ Çарăн хăйĕн юлашки ĕçне тумалли юлать: пирĕн союзниксен çарĕсемпе пĕрле кĕрешсе, фашистла нимĕç çарне аркатса тăкас ĕçе вĕçлемелле, фашистла тискер кайăка хăйĕн шăтăкĕнче вĕлермелле, Берлин çине çĕнтерӳ ялавне çĕклесе лартмалла.

Çак аслă тĕллеве пурнăçламашкăн совет халăхĕ хăйĕн вăйне шеллемĕ—çулпуçăн сăмахне итлекен кашни çын хăйĕн ăшĕнче çавăн пек каласа тупа тăвать.

Сталин юлташ çапла калать:

— Сывă пултăр пирĕн çĕнтерӳллĕ Хĕрлĕ Çар!

— Сывă пултăр пирĕн чаплă Тинĕс-Çар Флочĕ!

— Сывă пултăр хăватлă совет халăхĕ!

— Сывă пултăр пирĕн аслă Тăван çĕршыв!

— Фашистла нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Сталин юлташ чĕнсе каланине залри çынсем пурте ырласа йышăнаççĕ. Пурте ура çине тăраççĕ. Сталин юлташа нумайччен тăвăллăн алă çупса тата саламласа ăсатса яраççĕ.

Сталин юлташа салам яма сĕнӳ параççĕ. Сталин юлташа ямалли салама ВКП(б) Мускав хула комитечĕн секретарĕ Павлюков юлташ вуласа парать. Унта темиçе миллион совет çыннин хальхи вăхăтри шухăш-кăмăлĕсене палăртса панă. Вăл шухăш-кăмăлсем çав салама вуланă чухне çĕнĕрен палăрса каяççĕ, ларури çынсем ăна вуланă чухне час-часах нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ. Пурте, пĕр çын пек пулса, хăйсен вырăнĕнчен тăраççĕ, хаваслăн алă çупаççĕ.

Сталин юлташ çине çав тери юратса тата чунтан-чĕререн парăнса пăхаççĕ. Саламлă сăмахсем, «ура» кăшкăрни, алă çупни — халăх шухăш-кăмăлне çавăн пек палăртни нихăçан та чарăнас çук пек туйăнать.

Пронин юлташ чаплă ларăва хупăннă тесе пĕлтерет.

Сталин юлташ ларури çынсемпе ăшшăн сывпуллашса уйăрăлать. Ăна тата унăн боевой соратникĕсене — партипе правительство руководителĕсене — нумайччен алă çупса тата саламласа ăсатаççĕ.

Çынсем залран çав тери савăнса тата пирĕн тĕреслĕхле ĕç сывăх вăхăтрах çĕнтерессине нихăçанхиччен те хытăрах ĕненсе тухаççĕ. (ТАСС).

Çулпуç докладне пĕтĕм çĕршыв тимлĕн итлерĕ

Сталин юлташăн хĕрӳллĕ сăмахĕсем ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тума чĕнеççĕ

ШАХАСАН, ноябрĕн 9-мĕшĕ. (Телефонпа). Сталин юлташ ноябрĕн 6-мĕшĕнче тунă доклада нумай колхозсенче радиопа итлерĕç. Доклад пичетленнĕ хаçатсене илнĕ хыççăнах колхозсенче пухусем ирттерме тытăнчĕç. «Гвардеец» колхозри пухăва 100 çын ытла пуçтарăннă. Колхозниксемпе колхозницăсем аслă çулпуç докладне тулли кăмăлпа кĕтсе илеççĕ.

* * *

Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра нумай цехсенчи агитаторсемпе вулавçăсем рабочисемпе работницăсене тата служащисене Сталин юлташ докладне вуласа паллаштарма пуçларĕç. Çакна май, ĕçри хастарлăх ӳссе пырать. Нумай рабочисем, Сталин юлташ доклачĕ çине ответлесе, çĕнĕ обязательствăсем илеççĕ.

* * *

Çĕрпӳ хулинчи ĕççыннисем, пĕтĕм совет халăхĕ пекех, Сталин юлташăн Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарни çинчен тунă докладне радио тăрăх пысăк савăнăçпа итлерĕç. Отечественнăй аслă вăрçă инвалидĕ Павлов юлташ Сталин юлташăн докладне итленĕ хыççăн çапла каларĕ:

— Сталин юлташăн витĕмлĕ сăмахĕсем пире, тылра ĕçлекенсене, çĕнĕ вăй параççĕ. Татах та лайăхрах ĕçлесе, Хĕрлĕ Çара пулăшас килет.

Сталин юлташăн доклачĕ пичетленсе тухнă хаçатсене илсенех район центрĕнчи партипе совет активĕ, пурĕ 30 çын, колхозсене тухса кайрĕ. Вĕсем Сталин юлташăн историллĕ докладне колхозниксемпе колхозницăсене ăнлантарса параççĕ.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, ноябрĕн 9-мĕшĕ. (Телефонпа). Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарни çинчен Сталин юлташ тунă доклад пичетленсе тухнă хаçата илнĕ хыççăн, ВКП(б) райкомĕ партипе совет активне пухса канашлу туса ирттерчĕ. Колхозниксемпе колхозницăсене Сталин юлташ докладне ăнлантарса пама паян колхозсене 30 çын ытла тухса кайрĕç.

С. ШАДИН.

Совет гражданĕсене Франциpен хăйсен Тăван çĕршывне ярасси çинчен

ПАРИЖ, ноябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Франције Гитлер çарĕсем йышăнса тăнă вăхăтра нимĕçсем тыткăна лекнĕ совет çыннисен пĕр пайне Германирен Францин тĕрлĕ районĕсене тата тĕрлĕ сăлтавсемпе янă. Çав çынсем хушшинче, Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче тыткăна лекнĕ красноармеецсемсĕр пуçне, вăхăтлăха оккупациленĕ совет облаçĕсенчен нимĕçсем ирĕксĕр куçарса кайнă совет гражданĕсем те пулнă. Совет гражданĕсем унта мĕн чухлĕ пулнине калама йывăр. Анчах та çакă паллă: Франције çав майпа илсе кайнă совет гражданĕсенчен нумайĕшĕ часах хăйсене хупнă лагерьсенчен тарма, француз партизанĕсем енне куçма тытăннă. Тата çакă та паллă: гитлеровецсем строевой подразделенисене пухса тăратнă совет çыннисем нимĕçсен командирĕсене тата хăйсен хуралне вĕлерсе пĕтернĕ те, союзниксен çывхарса пыракан чаçĕсем патне куçса, çав союзниксемпе пĕрле гитлерла çарсене хирĕç паттăррăн кĕрешнĕ.

Анчах апла пулин те тата пĕтĕм тĕнчери йăласене пăсса, Франције союзниксен çарĕсем ирĕке кăларнă хыççăн çав совет гражданĕсенчен чылай пысăк пайне союзлă державăн тăшман тыткăнĕнчен ирĕке кăларнă гражданĕсен прависене паман, вĕсене тыткăна лекнĕ çынсен лагерьне тыткăна лекнĕ нимĕçсемпе пĕрле хупнă.

Хальхи вăхăтра Совет Союзĕн Франциpи представителĕсем совет гражданĕсене Францин тыткăна лекнĕ çынсем валли тунă лагерĕсенчен ирĕке кăлармалли мерăсем йышăннă, çав çынсене хăйсен тăван çĕршывне яма пуçланă та ĕнтĕ.

Лагерьсенче совет гражданĕсене йывăр условисенче хăш чухне тата тарăхтармалла условисенче пурăнтарни палăрать. Дижонра вĕсене лагерь коменданчĕ нимĕç пулса тăракан лагере хупнă. Марсель районĕнче «Боммет» лагерĕнче совет гражданĕсене тыткăна лекнĕ нимĕçсемпе пĕрле тытса усраççĕ, çав лагерĕн пуçĕнче, Дижонри пекех, нимĕç тăрать. Паллă ĕнтĕ, унта лагерь начальстви тыткăна лекнĕ нимĕçсене лайăхрах условисем туса панă. Совет посольствин представителĕсем лагерьсене пăхса тухнă хыççăн çеç çав совет гражданĕсем валли тунă йĕркене улăштарнă. Анчах пур çĕрте те апла улăштарман-ха. Марсель районĕнче совет гражданĕсене Африкăри ют çĕршыв легионне ирĕксĕр çырăнтараççĕ. Унта çав легиона çырăнма килĕшмен совет гражданĕсене питĕ хытă тыткалаççĕ.

Францири совет посольстви çавăн пирки Францин ют çĕршыв ĕçĕсен министерствине протест панă.

Пĕрлешӳллĕ Штатсенче президент суйлани

РУЗВЕЛЬТ ÇЕНТЕРНИНЕ ДЬЮИ ЙЫШАННА

ЛОНДОН, ноябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Нью-Йоркри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Дьюи паян ирхине радиопа сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: «Илнĕ даннăйсем тăрăх, çакă паллă: Рузвельта тăваттăмĕш хут президента суйланă. Таса кăмăллă американецсем пурте халăхăн çак ирĕкĕпе килĕшĕç. Эпĕ Рузвельта чунтан-чĕререн саламлатăп», тенĕ.

Дьюи суйлавра хăй аяла пулнине йышăннă вăхăтра вăл 14 штатра малта пынă, çав штатсенче 136 выборщик ун майлă пулнă; Рузвельт ун чухне 34 штатра малта пынă, çав штатсенче 395 выборщик ун майлă пулнă.

ЛОНДОН, ноябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 8-мĕшĕнче каçхине 7 сехетре Рейтер агентстви президента суйланă чухне мĕн чухлĕ сасă панине пĕлтернĕ. Рузвельтшăн 407 выборщик, Дьюишĕн 124 выборщик сасă панă. Çапла, Рузвельтшăн 27.241.939 çын сасăланă, Дьюишĕн 22.327.226 çын сасăланă.

ОКТЯБРЬТИ СОЦИАЛИЗМЛА АСЛА РЕВОЛЮЦИ 27 ÇУЛ ТУЛТАРНА ЯТПА ТЕГЕРАНРА МИТИНГ ТУМА ШУТЛАНА ÇЫНСЕНЕ АРЕСТЛЕНЕ

ТЕГЕРАН, ноябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Паян ирхине Иранри çар влаçĕсемпе полицийĕ Тегеранри профсоюзсен тата ытти организацисен представителĕсене арестленĕ. Çав представительсем Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарнă ятпа Тегеранра йышлă çынлă митинг туса ирттерме шутланă. Вĕсем ун çинчен çар губернаторне вăхăтра çырса пĕлтернĕ, митинга Октябрьти революци 27 çул тултарнине уявласа ирттерме çеç пухатпăр, тенĕ. Апла пулин те тата меджилисăн хăшпĕр депутачĕсем протестленĕ пулин те, Тегеранри профсоюзсен совечĕн çуртне çарсемпе полици отрячĕсем йышăннă. Профсоюзсемпе обществăллă организацисен çав çуртра пулнă пур представителĕсене те арестленĕ те полицие илсе кайнă.

Саед правительстви çавăн пек хăтланнă пирки Иранри мĕнпур прогрессивнăй ушкăнсем хытă тарăхаççĕ.

РУМЫНИРЕ ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВО ТУНА

БУХАРЕСТ, ноябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Румынире çĕнĕ правительство тунă. Правительствăна çаксем кĕнĕ: премьер-министр тата çар министрĕ — Санатеску, премьер-министр заместителĕ Петр Гроза, шалти ĕçсен министрĕ — Стенеску (национал-царанист), ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ—Мизояну (партире тăман çын), çутĕç министрĕ — Войтек (социал-демократ), социальнăй обеспечени министрĕ — Радчану (социал-демократ), юстици министрĕ — Патрашкану (коммунист), финанс министрĕ — Ромничану (либерал), сывлăх министрĕ — проф. Даниэльополь (либерал), обществăллă ĕçсен министрĕ — Соломон (национал-царанист), ĕç министрĕ — Николау (профсоюзсенчен), вак халăхсен министрĕ — проф. Владеску-Ракоса («Патриотсен союзĕ»), халăх хуçалăх министрĕ — Леукуцна (национал-царанист), çулйĕр министрĕ — Георгиу Деж (коммунист), çĕрĕç министрĕ — проф. Худица (национал-царанист), культурăпа искусствăсен министрĕ — Хица Поп (национал-царанист) çар промышленноçĕн министрĕ—Бебе Братиану (либерал), коопераци министрĕ — Фотино (либерал)

ФАШИСТСЕМ РУМЫНИ ПРАВИТЕЛЬСТВИН ХУТЛЕХЕНЧЕ

БУХАРЕСТ, ноябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Перемири килĕшĕвĕн 14-мĕшпе 15-мĕш статьисене пурнăçа кĕртес шутпа Румыни правительстви октябрĕн 4-мĕшĕнчех государство аппаратне Германи майлă ĕçлекен çынсенчен, Антонеску майлă çынсенчен железногвардеецсенчен тата ыттисенчен те тасатма хушакан декрет кăларнăччĕ. Анчах та çак тĕлĕшпе ку таранччен нимĕн те туман-ха. Государство аппарачĕ Антонеску вăхăтĕнчи пекех юлнă, министерсемпе хăшпĕр учрежденисен руководителĕсене çеç улăштарнă. Çарта ертсе пыракан вырăнсенче Антонеску вăхăтĕнче ларнă çынсемех лараççĕ. Союзниксен Контроль Комиссийĕ хушнипе тытса хупнă вăрçă преступникĕсем çеç унта лармаççĕ.

Румыни правительстви государство аппаратне фашистла çынсенчен тасатма тăрăшни курăнмасть, ун вырăнне вăл чылай чухне Антонескуна активлă пулăшса тăнă çынсене. Союзниксен Контроль Комиссийĕ кăтартса панăскерсене, хӳтĕленĕ.

РУМЫНИРИ ЕÇСЕМ

БУХАРЕСТ, ноябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Контроль Комиссийĕ Румыни премьер-министрне Санатеску генерала меморандум панă. Унта сентябрĕн 12-мĕшĕнче йышăннă перемири Килĕшĕвĕн хăшпĕр условийĕсене Румыни органĕсем çителĕклĕ пурнăçласа пыманнине кăтартнă. Меморандумра Румыни органĕсем çав Килĕшĕвĕн 2-мĕш статьине — Германипе Венгрин Руминире пурăнакан гражданĕсене тытса чарма хушаканскерне, 8-мĕш статьине — Германипе Венгрин тата вĕсен Румынире пурăнакан гражданĕсен пурлăхĕпе хаклă япаласене контрольсĕр тытса илме хăтланнине пĕтерсе лартма хушаканскерне, тата Килĕшĕвĕн 11-мĕш статьине — Совет Союзне сиен кӳнĕшĕн Румыния ăна сапламалли çинчен калаканскерне, Румыни органĕсем пурнăçа кĕртменни çинчен каланă. Меморандумра çавăн пекех тата румынсем Совет территорине оккупацилесе тăнă вăхăтра унтан саратса кайнă совет пурлăхĕсене Совет Союзне таварса парас тĕлĕшпе Румыни органĕсем çителĕклĕ ĕçлеменнине кăтартнă. Союзниксен Контроль Комиссийĕ Румыни органĕсене перемирин мĕнпур условийĕсене хăвăртрах тата тӳрĕ кăмăлпа пурнăçа кĕртме сĕнет.

Ноябрĕн 4-мĕшĕнче Союзниксен Контроль Комиссийĕн çав меморандумне Бухарестри пур хаçатсенче те пичетлесе кăларнă.

ВЫШИНСКИЙ ЮЛТАШ БУХАРЕСТА ПЫНА

БУХАРЕСТ, ноябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Перемири килĕшĕвне мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслеме паян, ноябрĕн 8-мĕшĕнче, Бухареста СССР Ют Çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕ А. Я. Вышинский пынă.

ЛЮБЛИНРИ ТРАУРЛА МИТИНГ

ЛЮБЛИН, ноябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 1-мĕшĕнче Люблин хулинче йышлă çынлă траурлă митинг пулса иртнĕ. Ăна нимĕç оккупацийĕ вăхăтĕнче гитлеровецсем вĕлернĕ çынсене тата Польшăна ирĕке кăларассишĕн нимĕç оккупанчĕсемпе çапăçса вилнĕ Хĕрлĕ Çарпа Польша çарĕн воинĕсене хисеплесе пухнă. Хулари темиçе пин çын хула варринчи площаде пухăннă. Вырăнти предприятисемпе государство учрежденийĕсенче ĕçлекен рабочисемпе служащисем, вĕренекенсем, политикăллă партисен вырăнти организацийĕсен членĕсем тата Польша çарĕн чаçĕсем митинга организованнă пынă. Вилнĕ геройсен вилтăпри умне хисеплĕ хурал тăратнă. Митингра Польша Халăхĕн Совечĕн, Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕн тата Польша çарĕн командованийĕн представителĕсем те пулнă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

НОЯБРĔН 6-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Ноябрĕн 6-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

Ноябрĕн 5-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 16 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă.

НОЯБРĔН 7-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Ноябрĕн 7-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

Ноябрĕн 6-мĕшĕнче пирĕн çарсем, тĕллĕн-тĕллĕн çапăçса, нимĕçсен 15 танкне çĕмĕрсе тăкнă.

НОЯБРĔН 8-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Ноябрĕн 8-мĕшĕнче фронтра паллă улшăнусемех пулман.

Ноябрĕн 7-мĕшĕнче пирĕн çарсем, тĕллĕн-тĕллĕн çапăçса, нимĕçсен 14 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитлă артиллери тăшманăн 5 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Хĕвелтухăç Пруссире тăшмана хирĕç тупăсемпе тата пулеметсемпе персе тăнă. Тильзит хули районĕнче нимĕçсем моторлă лодкăсемпе Неман шывĕн сылтăм хĕрри патне çывхарма хăтланнă. Пирĕн боецсем тăшмана вăхăтра курнă та пеме пуçланă. Тăшманăн моторлă икĕ лодкине шыва путарнă. Ытти участоксенче пирĕн подразделенисем разведка тунă тата нимĕçсен персе тăракан вырăнĕсене пĕтере-пĕтере тăкнă. Танк водителĕ Володуев юлташ боевой задание пурнăçланă чухне тăшманăн танксене пемелли батарейине курнă. Володуев юлташ гитлеровецсене атакăланă та хăй танкĕн гусеницисемпе нимĕçсен туппине çĕмĕрсе тăкнă.

* * *

Пултуск хулинчен кăнтăртарахра пĕр соединени чаçĕсем тăшманăн темиçе атакине сирсе янă. 200 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн 4 танкĕçĕ хăй тĕллĕн çӳрекен туппине çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. Тепĕр участокра пирĕн артиллеристсемпе минометчиксем тăшман çарĕсем пухăнса тăнă тĕле вăйлă персе илнĕ. Гитлеровецсене пĕр батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Чехословакире, Ужгород хулинчен хĕвеланăçнерехре, пирĕн пехотинецсем гитлеровецсене сасартăк атакăланă та лайăх позицисене тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 150 вилли выртса юлнă. 2 тупă, 14 пулемет, 7 миномет, 2 радиостанци тата çар пурлăхĕн складне тытса илнĕ. 200 нимĕçпе венгера ытла тыткăна илнĕ.

* * *

Венгрире, Бая хули районĕнче, тăшман Дунай шывĕн хĕвелтухăç хĕррине хăй пехотин пĕр батальонне каçарнă. Пирĕн подразделенисем гитлеровецсем шыв хĕррине анниччен кĕтсе тăнă, вара вĕсене çав тери хăвăрт атакăланă. Кĕске çапăçура тăшман десантне пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă. Шыв хĕрринче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен темиçе çĕр вилли выртса юлнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташ ĕççынни депутачĕсен Мускав хула Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă доклад пирĕн Тăван çĕршыври рабочисене, колхозниксене тата интеллигенцие çав тери хавхалантарнă, вĕсен патриотизмлă шухăш-кăмăлне çĕклесе янă.

Мускав хулинче подшипниксем тăвакан Каганович ячĕпе тăракан пĕрремĕш заводри митингра çамрăксен бригадин бригадирĕ строгальщица Барышникова юлташ сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: «Сталин юлташ совет хĕрарăмĕсемпе пирĕн çамрăксем хăйсене хăйсем хĕрхенмесĕр ĕçленине пысăка хурса хакларĕ. Сталин юлташ мухтани пирĕншĕн чи лайăх награда пулса тăрать. Фронта пулăшас ĕçе тата ытларах вăйлатма эпир хамăрăн мĕнпур вăя хурса ĕçлĕпĕр. Танксемпе самолетсем тăвакансем подшипниксем çитмен пирки нихăçан та чарăнса тăрас çук».

Ленинградри машинăсем тăвакан Ленин ячĕпе тăракан заводри рабочисен митингĕнче Власов юлташ сăмах тухса каланă. Вăл çав заводра 50 çул ытла ĕçленĕ. Вăл çапла каланă: «Пирĕн коллектив производствăра çĕнĕ çĕнтерӳ турĕ. Мартен кăмакине эпир срокчен пилĕк уйăх малтан хута ятăмăр. Çавăн пекех пĕрремĕш турбинăна срок çитиччен пухса пĕтертĕмĕр, паян ăна тĕрĕслесе пăхнă. Эпир хамăр алăпа 40 пин тăваткăл метр ытла производствăллă лаптăка юсаса хута ятăмăр. Ленин хулинчи рабочисем, Сталин юлташăн кăтартăвĕсемпе хĕçпăшалланса, фашистла тискер кайăка вĕлерме Хĕрлĕ Çара пĕтĕм вăйпа пулăшĕç».

Киевра «Крещатикстройри» рабочисен митингĕнче стахановец-бригадир Козлов юлташ сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: «Эпир Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсемпе тивĕçлипе мухтанатпăр. Ирсĕр тăшмана пирĕн Тăван çĕршыв çĕрĕнчен сирпĕтсе кăларнă, совет çарĕсем гитлеровецсене халĕ Хĕвелтухăç Пруссире çĕмĕреççĕ. Украина халăхĕ хăрама пĕлмен совет воинĕсене питĕ хытă тав тăвать, вĕсем Украинăна ирсĕр фашистла нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларчĕç. Пирĕн пĕтĕм халăх пĕр шухăшпа — фашистла тискер кайăка хăйĕн шăтăкĕнче çапса пăрахма Хĕрлĕ Çара пĕтĕм вăйпа пулăшас шухăшпа пурăнать. Эпир хамăрăн çав тери илемлĕ хулана нимĕç ирсĕрĕсем кӳнĕ йывăр сурансенчен хăвăртрах тӳрлетсе çитерме пулатпăр. Украина столицине эпир ăна нимĕçсем оккупацилениччченхинчен те хитререх тума тăрăшăпăр».

Бакура «Лениннефть» тресчĕн 13-мĕш промыслинчи рабочисен митингĕнче мастер Магерамов юлташ сăмах тухса каланă. «Сталин юлташа итленĕ чухне, — тенĕ Магерамов юлташ, — вăл кунта, пирĕн хушăра, пирĕнпе чунтан калаçса тăнă пекех туйăнать. Вăл пире ĕçре çĕнĕ чаплă ĕçсем тума хавхалантарать. Сталин юлташ çапла каланă: сывăх вăхăтрах çĕнтерӳ ялавне Берлин çине çĕклесе лартăпăр, тенĕ. Эпир, нефтянниксем çав татăклă çĕнтерӳ кунне çывхартма хамăртан мĕн килнине пурне те тăвăпăр».

Ставрополь крайĕнчи Апанасенко районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕнчи колхозниксен пухăвĕнче çамрăк колхозница Вера Хуторная юлташ сăмах тухса каланă. Унăн звени кăçал кашни гектартан 138 пăт тĕштырă туса илнĕ. «Эпир кăçал вăйлă тырпул туса илтĕмĕр,— тенĕ Хуторная юлташ. — Пирĕн колхоз хăйĕн государство умĕнчи обязательствисене пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртрĕ çеç мар, вăл тата планран ирттерсе нумай тырă пачĕ. Колхоз амбарĕсенче пирĕн тата нумай тĕштырă выртать. Сталин юлташ çапла каланă: «Тырăпа апат-çимĕçсĕр вăрçма çук», тенĕ. Эпир государствăна тата ытларах тырă пама пултаратпăр. Çапла вара эпир Хĕрлĕ Çара тăшмана татăклăн çĕнтерсе тăкма пулăшатпăр». Хуторная юлташ сĕннине пĕтĕм пуху ырласа йышăннă. Колхозниксен пухăвĕ Хĕрлĕ Çар фондне ку таранччен панисĕр пуçне тата 6 пин пăт тулă пама йышăннă.

Октябрь праçникне уявлани

ШУПАШКАРТА

Республика столицинчи предприятисемпе учрежденисенче Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарнă ятпа чаплă ларусем пулса иртнĕ.

Ноябрĕн 5-мĕшĕнче Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводри чаплă ларура доклад хыççăн уяв умĕнхи ăмăртура мала тухнă Давыдова юлташ ертсе пыракан цеха заводăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне панă. Давыдова юлташ, ялава алла илсе, цех коллективĕ ноябрь уйăхĕнче тата лайăхрах ĕçлĕ, тесе шантарса каланă. Пуху Сталин юлташ патне саламлă çыру янă.

Пионерсен çуртĕнче çамрăксен вечерĕ тата ачасен утренникĕ пулса иртнĕ.

Хулари ытти предприятисемпе учрежденисенче те чаплă ларусем иртттернĕ.

КАНАШРА

Хулари ĕççыннисем аслă уява савăнăçлăн уявласа ирттернĕ. Предприятисемпе учрежденисенче уяв ячĕпе чаплă ларусем пулнă. Вĕсенче Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарни çинчен докладсем тунă. Чылай çĕрте художествăллă пултарулăх вечерĕсем пулнă.

Хĕрлĕ Çар воинĕсен çемьисене—уяв парнисем

Шупашкарти нумай предприятисемпе учрежденисен коллективĕсем Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарнă ятпа Хĕрлĕ Çар воинĕсен çемьисене парнесем панă. Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра 100 çемьене парнесем панă. Совет Союз Геройĕн арăмĕ Панникова юлташ икĕ кĕпе, продуктсем илнĕ. Унсăр пуçне, унта фронтовиксен çемьисене вутă турттарса панă.

* * *

Сĕнтĕрвăрри хулинчи ĕççыннисем фронтовиксен 400 çемьине уяв парнисем панă. Райпотребсоюз тăлăха юлнă 3 ачана пĕрер мăшăр çăмата панă, инвалидсен артель коллективĕ пĕр фронтовикăн ачисене пальтопа кĕпе-йĕмсем, 5 офицер ашшĕне Карасева продуктсем панă. Предприятисемпе учрежденисен руководителĕсем, нумай фронтовиксен çемьисем патне кайса, вĕсене праçник ячĕпе саламланă.

* * *

Çĕрпӳ районĕнче фронтовик Силантьев çемьине уяв парни леçсе панă, ăна 5 пăт тулă çăнăхĕ, 2 пальтолăх материал панă.

КОМИ АССР-ĕнчи ПИОНЕРСЕН ÇУРЧĔ

Сыктывкар хулинче пионерсен çĕнĕ çуртне уçнă. Çав çурт хулари чи илемлĕ çуртсенчен пĕри пулса тăрать. Ăна илемлетес тата хатĕр тăвас тĕлĕшпе чи лайăх художниксемпе писательсем ĕçленĕ. Пионерсен çуртĕнче кружоксем ĕçлеме пуçланă ĕнтĕ. (ТАСС).

П. И. ВАЛЕСКАЛН — ЛАТВИ ССР-ĔН ЮТ ÇЕРШЫВ ĔÇЕСЕН ХАЛАХ КОМИССАРЕ

РИГА, ноябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Латви ССР-ĕн Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, П. И. Валескална Латви ССР-ĕн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ пулма лартнă.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, ноябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Хĕвеланăç Голландире питĕ ăнăçлăн малалла куçса пынă. Союзниксен çарĕсем Маас шывĕ патнелле çывхарса пыраççĕ. Голландс—Дип шывĕсене тата Гезден, Глюндерт, Динтельсорд хулисене тăшмантан тасатнă. Союзниксен çарĕсем Толен утравĕпе Филипсланд перешеекĕ çинче çапăçаççĕ.

Вальхерен утравĕ çинче Домбург хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре малалла кайнă Союзниксен çарĕсем Миддельбург хулинчен кăнтăртарахра пĕр пин ярдра тăраççĕ.

Çурçĕр тата Хĕвелтухăç Голландире чутун çулсене татнă. Кăнтăр-хĕвелтухăç Голландире Меейель районĕнче вăйлă çапăçусем пыраççĕ.

Мозель шывĕн улăхĕнче союзниксен çарĕсем Берг хулине ирĕке кăларнă тата Тионвильтен 8 миля çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре шыв урлă каçса кайнă. Унтан кăнтăртарахра союзниксен çарĕсем Баккар районĕнче наступлени туса пынă.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Германипе Голландири объекчĕсене хаяррăн тапăннă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактăран — 0—67, заместительне секретарен — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00785. Типографи № 1, Управлении полиграфпро ... при СНК ЧАССР. Заказ № 2. ф. 6. 59×42 и. д. Тираж 10.000 экз.